# Юрататăп хам Чăваш çĕрнех

Сăвви Олег Прокопьевăн | Кĕвви Земфира Яковлеван



1. Эп сана ширанӑ чух, телейӗм,
Каям мар ҫич тинӗс леш енне!
Урӑх тӗнчере ширас темерӗм,
Юрататӑп хам Чӑваш ҫӗрнех,
Юрататӑп хам Чӑваш ҫӗрнех.
Эс хитре, юманлӑхсен шӑв-шавӗ,
Юмансем ҫулҫисене сарсан.
Ҫултан-ҫул вӑрманӗ, ҫӗрӗ-шывӗ
Шурӑ-шурӑ шупӑр тӑхӑнсан.

2. Юрататӑп, юрату – телейӗм!
Тунсӑхлатӑп, тунсӑхӑм – телей!
Юрату, сана мӗнпе виҫейӗп?!
Ҫук, виҫеймӗп! Кӑшкӑрап: эх-е-ей!
Ҫук, виҫеймӗп! Кӑшкӑрап: эх-е-ей!
Эхе-хе-е-ей! Ман сассӑм, вӗссе тух та
Пин-пин ҫын сассипелле пӗрлеш!
Пурӑнӑҫ хӑш чух ҫиллес пулсан та
Ман ҫӗршыв вӑл – нишлӗскер темес.

3. Кам хӑять ҫӗре усал сунмашкӑн?
Вӑл ҫынна эс, тусӑм, ан ӑмсан!
Тивӗҫ пурнӑҫ, пурнӑҫ ылханмашкӑн...
Ун пек ҫын телейсӗр юлакан.
Ун пек ҫын телейсӗр юлакан.
Эп илместӗп чул чӗре парсассӑн,
Мӗн-ха туйтӑр хытӑ муклашка?
Чунӑмра ҫын чӗриех пулсассӑн
Эп телейлӗ икӗ хут тата.